# **Ача**-пăча библийĕ

## Тăратаканĕ





# **Ной тата**
# пĕтĕм çĕре
# **шыв илни**

Çыравçи: **Edward Hughes**

**Иллюстрацилекенĕ**: **Byron Unger; Lazarus Alastair Paterson**

**Адаптацилекенĕ**: **M. Maillot; Tammy S.**

Куçаруç**и: www.christian-translation.com**

**Калăплакан компанийĕ**: Bible for Children
**www.M1914.org**

**©2021 Bible for Children, Inc.**
Лицензи: сутса яриччен сирĕн çак халапа копилесе **илме** е пичетлеме ирĕк пур.


Ной Турра пуççапакан çын пулнă. Ыттисем пурте Турра курайман тата ăна итлемен.
Пĕррехинче Турă аптраттарса ӳкерекен сăмахсем каланă.

“Эпĕ çак йĕркесĕр тĕнчене пĕтерĕп,
- тенĕ Турă **Ноя.**
- Санăн çемйӳ çеç çăлăнса юлĕ”.



Турă Ноя пĕтĕм çĕре шыв илесси пирки асăрхаттарнă.




“Хăвăн çемйӳ валли тата нумай
чĕр чуна вырнаçтарма çителĕклĕ
йывăç ковчег, пысăк кимĕ, ту”,
- тесе хушнă Ноя. Турă Ноя
тĕрĕс хушусем панă. Ной
ĕçе
тытăннă!

Ной мĕншĕн ковчег **тунине** ăнлантарса панă **чухне** çынсем

**унран** кулнă çеç. **Ной** чарăнман. Вăл çынсене Турă çинчен те **каласа** панă. Анчах ăна **никам та итлемен.**




Нойăн çирĕп ĕненӳ пулнă. Çумăр
унччен нихăçан та пулман пулин
те, вăл Турра ĕненнĕ.
Кĕçех ковчег хатĕр
пулнă.

Унтан чӗр чунсем те ҫитнӗ. Турă ҫичӗ тӗрлӗ чӗр чӳн, унтан тата икӗ тӗрли **илсе** килнӗ.



Кайăк- кĕшĕкĕ, тискер кайăкĕсем пысăкки те пĕчĕкки **пурте ковчег** патнелле туртăннă**.**





**Тен,** çынсем Ной чĕрчунсене тиенĕ чухне мăшкăлласа кулнă **та.** Вĕсем Турра хирĕç çылăх **тума** пăрахман. Вĕсем **ковчега** кĕме **ыйтман та.**



Ç**апла карап**
çине **пур**
чĕрчунпа
кайăк-**кĕшĕк**
**та пырса** кĕнĕ.
“Ковчега кĕр”**, -**
тенĕ Ноя Турă**.**
“**-** Эсĕ **те**, санăн çемйӳ **те**”**.**


**Ной,** унăн
арăмĕ, унăн
виçĕ ывăлĕ тата
вĕсен арăмĕсем ковчега
кĕнĕ. Вара Турă алăка хупнă!



Унтан çумăр çума пуçланă.
Вăйлă çумăр çĕре хĕрĕх
**кун та х**ĕ**р**ĕх каç пĕ**р**
**чар**ă**нмас**ă**р йепетн**ĕ.



**Шыв хуласемпе ялсене** тултарнă. Çумăр чарăнсан **тусем те шыв айне путн**ă. Сывлăшпа **сывлакансем** пурте вилнĕ.



Шыв хăпарсан, **ковчег** çӳлелле ишсе тухнă. **Тен,** шалта тĕттĕм пулнă, **тен,** тирпейсĕр **те, тен,** хăрушă та **пулн**ă пулĕ. **Анчах та ковчег Ноя шыв** илесрен хӳтĕленĕ.

Пилӗк уйӑхран Турӑ типӗтекен ҫил янӑ. **Ковчег** майӗпен **Арарат** ҫуллӗ тӑвӗ ҫинче чарӑнса тӑнӑ. **Ной шыв чакичченех шалта тата** хӗрӗх кун **кӗтнӗ.**



Ной ковчегĕн уçă чӳречинчен ула куракпа кăвакарчăна янă. **Канма** типĕ вырăн тупайманнипе кăвакарчăн Ной патне таврăннă.



Тепĕр эрнерен Ной тепĕр хут хăтланса пăхнă. Кăвакарчăн хăйĕн сăмсинче ешĕл **олива** çулçи илсе килчĕ.


Тепěр эрнере Ной
çěр типсе ларнине
пěлнě, мěншěн
тесен кăвакарчăн
таврăнман.

Турă Ноя ковчегран тухма вăхăт çитнĕ тесе каланă. **Нойпа** унăн çемйи чĕрчунсене кă**ларн**ă.



Ной ҫав тери сăваплă пулнă! Ăна та, унăн ҫемйине те **шыв илнинчен** ҫăлса хăварнăшăн вăл **Турра тав туса алтарь** тунă **та** пуҫҫапнă.





Турă Ноя ç**ирĕп** сăмах панă. **Этеме** сылăхĕсемшĕ**н** суд тумашкăн

Вăл урăх нихăçан та пĕтĕм çĕре шыв ямĕ**.**



Турă хăйё**н** **сăмахне** **яланах** **асра тытн**ă.

**Асамат** кĕперĕ турă сăмах **панине** пĕлтернĕ.

**Нойпа** унăн
çемйи çĕре шыв илнĕ
хыççăн çĕнĕ пурнăç
**тума тытăннă.**





Вăхăт иртнĕçемĕн унăн тăхăмĕ çĕнĕрен пĕтĕм çĕре вырăнаçса **тултарн**ă. Тĕнчери **пур** халăх **та Нойпа** унăн **ачисенчен** çуралнă**.**

Ной тата пётём çёре шыв **илни**

Турă Сăмахёнчи, Библири, халап

**ра вырнаçнă**

**Пултарни 6-10**

“Сирён Сăмахăрсен алăкё çутă **парать.” Псалом 119:130**

Bĕçĕ

Библири çак истори пире хамăр тĕлĕнмелле Турă çинчен каласа парать, вăл пире пултарнă тата эсир ăна пĕлччĕр тет.

Эпир япăх ĕçсем тунине турă пĕлет. Çылăхшăн **наказани**-вилĕм, Анчах Турă сире питĕ хытă юрататать, çавăнпа Вăл Хăйĕн Пĕртен-пĕр Ывăлне Иисуса Хĕрес çинче вилме тата сирĕн çылăхăрсемшĕн наказани пама янă. **Унтан** Иисус пурнăç патне таврăннă та киле, Пĕлĕте, кайнă! **Эсир** Иисуса ĕненетĕр пулсан тата çылăхăрсене каçарма ыйтатăр пулсан, вăл çавна тăвĕ! Вăл килĕ те халĕ сирĕнте пурăнĕ, вара эсир унпа ĕмĕр-ĕмĕр пурăнатăр.

**Эсир** ку чăнлăх пулнине ĕненетĕр пулсан, çакна турра калăр**:**

Хаклă Иисус, эпĕ эсĕ Турă пулнине ĕненетĕп, çылăхăмсемшĕн вилме этем пулса тăтăм, халĕ Вара эсĕ каллех чĕрĕ. Тархасшăн**, ман** пурнăçа кĕр те ман çылăхсене каçар: эпĕ халех çĕнĕ пурнăçпа пурăнма, пĕррехинче санпа яланлăхах пурăнма пултарăп. **Мана** сана пăхăнса тăма, саншăн ачу **пек** пурăнма пулăш. **Аминь.**

Библие вулăр та Турăпа кашни кун калаçăр!
**Иоанн 3:16**